# Çунатлă туссен – хĕрÿ тапхăр

**Республикăра кайăксен 270-е яхăн тĕсне шута илнĕ. Кашнин йăва çавăракан вырăнĕ хăйне евĕрлĕ, пĕри тепринчен уйрăлса тăрать. Чăваш Ене тĕрлĕ вăхăтра вĕçсе килеççĕ.**



*• Йăлăм шĕпшĕлĕ.*

Йăлăм шĕпшĕлĕ – çу уйăхĕн вĕçĕнче – çĕртме пуçламăшĕнче. Вăл – çĕпĕр тĕсĕнчен, Азин кăнтăр-хĕвел тухăç пайĕнче хĕл каçать. Пирĕн тăрăха каярах çитнине унăн çулĕ инçипе ăнлантармалла. Ака уйăхĕнче юхан шыв ейĕве каять те улăха хуплать, часах хăйĕн çыранне таврăнать. Йăлăм шĕпшĕлĕ шыв илнĕ улăхра йăва çавăрать. Шел те, кун пек çаран республикăра сахал. Çавăнпа шĕпшĕл йышĕ чакнă. Вăл Атăл утравĕсем çинче, юхан шыв вăррисенче чĕп кăларать. Ăна Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ.

Сад хăмăшĕн кайăкĕ, симĕс йĕкĕлти кайăк, уй шăрчăкĕн кайăкĕ, шăлан кайăк хăйсем чăваш çĕрĕнче «хуçа пулнине» çу уйăхĕн варринче е иккĕмĕш çуррине хыттăн сас парса пĕлтереççĕ. Аçисем хăйсене килĕшекен лаптăка йышăнса амисене илĕртеççĕ. Хăшпĕр аçи тÿрех йăва тума пуçлать. Мăшăрлансан ами туса пĕтерет, аçи майлаштарма пулăшать. Çу каçма суйласа илнĕ чăтлăха е улăхçарана йышăнсанах пур кайăк та юрласа ярать. Çапах та пирĕн патра çак ушкăн тĕпленсен кăна вун-вун тĕрлĕ сас хушăнать.

Вĕршĕн – Чăваш Ене чи юлашкинчен çитекен кайăксенчен пĕри. Хăвăрт тата ăста вĕçет. Çунатти çÿхе, чĕрнисем кĕске те черчен. Унăн латинла ячĕ урасăр тенине пĕлтерет. Вăл çĕр çине ансан çунатти сарлака, ури кĕске пулнăран вĕçсе хăпараймасть. Çавăнпа тикĕс тĕле лармасть. Çунаттине сарма уçă вырăн кирлĕ. Йывăç хăвăлĕнчен, çи витти çурăкĕнчен тĕртĕнсе тухать те вĕçме пуçлать. Ирĕке тĕртĕнсе тухма, кăпшанкă тытма чĕпписем «ашшĕ-амăшĕнчен» вĕренеççĕ.

Вĕршĕн хăйĕн пурнăçĕн ытларах пайне сывлăшра ирттерет. Вĕçнĕ чухнех тĕлĕрсе илет. Апат шыранă чухне çăварне карса пырать, унта шăна лекет. Çанталăк шăнтсан вĕçекен кăпшанкă çухалать. Кун пек чухне вĕршĕн йăваран тухмасть е сивĕ кунсем тăсăлсан апат шырама урăх вырăна куçать. Чи юлашкинчен çитсе йăва çавăракансем пĕр хутчен çеç чĕп кăлараççĕ. Республикăран пуринчен малтан вĕçсе каяççĕ. Сезонра иккĕ е тăваттă /çерçи пек/ кăлармаççĕ. Иртнĕ уйăхра чылайăшĕ йăва çавăрнă. Ку ĕçре ытларах ами тăрăшнă, çăмарта тунă, чĕп кăларнă. Ăна аçи пулăшнă. Çĕртме уйăхĕ кайăк-кĕшĕкшĕн – хĕрÿ тапхăр. «Ашшĕ-амăшĕ» чĕпсене хурт-кăпшанкăпа тăрантать, ют кайăк тапăнасран сыхлать. Аçин юрă шăрантарма пĕр вăхăт та çук.

Пирĕн ялта шăнкăрч кăçал ака уйăхĕн пуçламăшĕнче кăна юрласа ячĕ. Иртнĕ çул пуш уйăхĕн вĕçĕнчех курнăччĕ. Вĕсем кивĕ йăвара çăмарта тумаççĕ, вĕллере мĕн пуррине пĕтĕмпех кăлараççĕ, çĕнĕрен йăва çавăраççĕ. Чăн та, унта хĕл каçнă çерçисем çăмăллăн парăнасшăн мар. Шăнкăрч вĕсене тапăнсах хăваласа ярать. Вăл ушкăнра пурăнма хирĕç мар. Эпĕ пĕр йывăç çине 3 вĕлле вырнаçтарнине курнă. Пуринче те йăва çавăрчĕç. Кил хуçи савăнса кăна тăчĕ. Ара, пахча çимĕçе сиен кÿрекен хурт-кăпшанка нумай пĕтерчĕç. Сезонра пĕрре çеç чĕп кăлараççĕ. Аçисем /тен, амисем те/ тепĕр чухне йăвинчен инçетре пухăнса çĕр каçаççĕ. Мăн Çавал Атăла юхса тухнă тĕлте 10 пине яхăн шăнкăрч пуçтарăнса çĕр каçнине, ирех саланнине пĕлетĕп. Мĕншĕн ушкăнланни халĕччен паллă мар. Çу уйăхĕнче шурă пăрчăкан, пилеш кайăкĕ, сăрă чарлан, ула курак, ытти кайăк чĕп кăларать, çĕртмере çитĕнтерет.

**■ Владимир ЯКОВЛЕВ,**
**орнитолог**